*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

24 (2537) №
Хакĕ ирĕклĕ

2015
апрель ака 3

ЭРНЕКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă



## ПАХЧИ-ПАХЧИ

### Сыпма турат хатĕрле

Апрельте улма-çырла йывăççисене сыпас ĕçе малалла тăсаççĕ. Уйăх пуçламăшĕнче каярах сыпма туратсем хатĕрлеме юрать. Вĕсем çине этикетка çакаççĕ, хаçатпа чĕркеççĕ, унтан полиэтилен хутаçа хураççĕ те юр айне вырнаçтараççĕ (шыв тăман вырăнта) е холодильникра тытаççĕ. Сад ăстисем палăртнă тăрăх – тĕшĕллĕ çимĕç паракан йывăççисене апрелĕн 10-мĕшсенче сыпсан аван, вăрăллисемшĕн – апрелĕн 25-мĕшĕ.

### Сăтăрçăран хӳтĕленме

Çуркунне пуçлансанах анлă сарăлнă çимĕçе акма-лартма тытăниччен тымар хурчĕсене ултавлă майпа çиеле кăлараççĕ. 0,5-1 метртан сĕлĕ е урпа акаççĕ (шăтăка 4-5 вăрă хурса). Шăтнă калчан тымарне пăхса тĕрĕсленĕ май хуртсене суйлаççĕ. Татăксем туса каснă кишĕре е çĕрулмине çĕр ăшне тарăнах мар чавса хураççĕ, пĕр-пĕр туратпа çав вырăна паллă тăваççĕ. Хушăран пăхса хурт пуррипе çуккине тĕрĕслеççĕ.

Шыв йĕкехӳрине (полевка) пĕтерме вĕтетнĕ кишĕре (çĕрулмипе е шывра шӳтернĕ пăрçапа та усă кураççĕ) хими препарачĕпе (роденцидом) хутăштарса шăтăк патне хурса параççĕ. Усă вырăна мар, пăрăх татăкĕ ăшне вырнаçтараççĕ е тимĕр листипе хуплаççĕ. Капла наркăмăша ытти чĕрчунпа кайăк-кĕшĕк тăлпаламасть. Шăтăк 3-4 кун уçăлмасан кăшлакан сăтăрçăсен чунĕ тухнă теме пулать. Хăш-пĕр пахчаçă наркăмăшлă хутăша çăнăхран (30-40 гр), гипсран е алебастртан (20-25 гр) тата тип çуран хатĕрлет. Ăна çисен вар-хырăмра гипс хытать те сăтăрçă вилет.

## КИРЛĔ ПУЛĔ

400 гр кукша пуç (одуванчик) курăкĕн çулçине е 200-300 гр тымарне, е 200 гр курăка пĕтĕмĕшле илĕр те 10 литр ăшă шыва 3-4 сехете ярса лартăр. Сăрăхтарнă хыççăн ӳсен-тăран, йывăççем çине иленнĕ, хур кăтартакан сиенлĕ хурт-кăпшанкăна пĕтерме усă курăр. Пĕрремĕш хут папка çурăлнă чухне пĕрĕхтереççĕ, иккĕмĕшĕнче – чечек çурнă хыççăн, виççĕмĕшĕнче – 1 эрне иртсен. Малашне – сăтăрçăсем пуррине кура. Шĕвеке вăрах упрама юрамасть.

## КĔСКЕН

**ЧР** Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев РФ Президенчĕн Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ çумĕнчи канашăн ларăвне хутшăннă. Пенза хулинче иртнĕ мероприятире регионсенче çурт-йĕр тăвас ĕç аталанăвне тишкернĕ. Кашни çын пуçне тивекен пурăнмалли тăваткал метр виçипе Атăлçи тăрăхĕнче пирĕн республика малта пырать. Çурт-йĕрпе çыхăннă ытти кăтартусемпе те япăх мар ĕçлет.

**РФ** Президенчĕ кăçалхи февралĕн 26-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх – Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă ветерансем, салтак арăмĕсем, концлагере, блокадăна лекнĕ çынсем, тыл ĕçченĕсем (енчен те Раççей гражданствине илнĕ тата яланах Раççейре, Эстонире, Латвипе Литвара пурăнаççĕ пулсан) Çĕнтерӳĕн 70 çулхи юбилейĕпе хушма укçа илеççĕ. Вăл е ку ушкăнрисен укçа виçи тĕрлĕрен. Шупашкарта кун пек пулăшăва, тĕслĕхрен, 5,7 пин çын тивĕçет.

## КИЛ

ЯЛЙЫШ | ХӲТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ

**ПАЯН кун тăршшĕ 13 сехет те 14 минут. Уйăх тулса çитнĕ.**

**Кирилл кунĕ. Çак кун юлашки хут ярăннă хыççăн çунашкана тасатса çитес хĕлччен упрама хунă. Ватăсем сăнанă тăрăх – Кирилл кунĕнче çӳл тӳпене пăхма юраман, ӳкекен çăлтăра курасран хăранă, мĕншĕн тесен ку пулăм инкеке тенĕ. Çак кун уя тухнă, унран таса тырăпа савăнтарма ыйтнă.**

**ЫРАН – Хĕвеллĕ Ваçлей кунĕ. Тинех кĕтнĕ ăшă тата хĕвеллĕ кунсем çитĕç тенĕ. Çĕнĕ çурт е хуралтă лартма шухăшланă çын тумла шывĕ ăçталла юхса пуçтараннине сăнанă. Çав вырăнта хуралтă лартман. Унта лартнă çурта вăхăт иртнĕ май шыв илет тенĕ. Ирхи шуçăмпа хĕвеле сăнанă: ун тавра хĕрлĕ тĕсе асăрхасан лайăх тухăç кĕтнĕ. Хĕвеле асаилтерекен пĕчĕк çеç çавра кулачсем пĕçернĕ.**

**ВИÇМИНЕ – Кăчкă уявĕ е Никон кунĕ. Православи тĕнĕпе çак кун Иисус Иерусалима кĕнине уявлаççĕ, ун хыççăн тепĕр эрнерен Мăнкун çитет. "Çĕр айĕнчи шывсем, çиеле тухма сире çул уçса паратпăр", – тесе ялсенче мĕнпур çăлкуççене пăхса çаврăннă. Çăкăр тĕпренчĕкĕ, йĕтĕн, хĕвелçаврăнăш тĕшшисене сапса парса кайăксене садсемпе пахчасене йыхравланă.**

### Халăх сăнавĕ

✓ Апрельте шыв-шур вăйлă юхсан май уйăхĕнче курăк аван çитĕнет.

✓ Çак уйăхри виçĕ çумăр июнь уйăхĕнчи вун-вун çумăрпа танлашать.

✓ Йĕпе-сапаллă килсен çулла кăмпа нумай пулать.

✓ Чечекпе курăк тухсан кĕркунне тырă ăнса пулать.

✓ Уйра шыв-шур тăрсан утă капанĕ савăнтарĕ.

✓ Апрель – ултавлă: çанталăк кунне çичĕ хут улшăнать.

✓ Çак уйăхри шыв-шура çĕр ĕçсе тăранать тата вăранать.

## ЫЙТУ – ХУРАВ

### Чие çырлине сыватасчĕ

**? Пахчари чей çырли хуртланса кайрĕ, шăтăклă пулнăран пуçтарми те пултăм. Слива çырлин те çаплах. Манăн пахчара çеç мар, таврарисен те çавнашкалах. Йывăççене эмелпе сиплеме кая юлтăм-ши? Тен, мĕнле те пулин сыватма пулатех?**

**О. ПЕТРОВА. Çĕнĕ Шупашкар хули.**

Хисеплĕ вулаканăмăр, пирĕн тăрăхри чылай çырлана чей çырлисен шутне кĕртме пулать. Ахăртнех, эсир чие çырлине шута илнĕ, çакна кура хуравлама тăрăшăпăр та. Эсир пĕлтернинчен пахчари йывăçа мĕнле хурт тапăнни тата вăл мĕнле чирпе чирлине татса калама хĕн. Сад ăстисем чир-чĕрпе тата сиенлĕ хурт-кăпшанкăпа кĕрешес ĕçе чи малтан март вĕçĕнче е апрель пуçламăшĕнче пуçăнма сĕнеççĕ. Асра тытăр: ку ĕçе йывăç сĕткенпе туличчен пурнăçламалла. Капла эсир сивĕре хĕл каçнă мĕнпур сăтăрçăсенчен хăтăлăр.

Лавккасенче паян вĕсемпе кĕрешме пулăшакан препарат нумай, çыншăн вĕсем сиенсĕр. Кунашкаллисен шутĕнче: Агравертин, Фитоверм, Искру-Био. Циркон тата Экоберин шĕвекĕсемпе те усă курма юрать. Йывăçа "çунтарса" ярас мар тесен, тархасшăн, вĕсене хут çинче палăртнă виçепе хутăштарăр.

Чылай сад ăсти чие йывăçне 1 процентлă пăхăр купоросĕпе пĕрĕхтерме сĕнет. Вăл е бордос шĕвекĕ кăмпа чирĕсенчен лайăх пулăшать. Чирлĕ çулçăсене, çеçкесене, туратсене касса пуçтарма, ун хыççăн çунтарса яма ан манăр. Вăл вырăна кĕреçепе чавса тухăр.

### Сиенĕ пур

**? Эпир хамăр пурăнакан çуртăн стенисене шал енчен ПВХ панельпе çапрăмăр. Çак материал сывлăхшăн сиенлĕ мар-ши? Сиенлĕ пулсан ун çине обой çыпăçтарма юрать-и?**

**Анастасия АНДРЕЕВНА. Вăрнар районĕ, Хирпуç.**

Стенасене пенопластпа тата пластикпа çапма кирлĕ мар. Тĕслĕхрен, пенопласт стирол текен наркăмăшлă пăс кăларать. Ăна пула пуç ыратать, хăсас килет, куç аптăратать, сывлав çулĕ пӳлĕнет. ПВХ пластикра та, синтетика материалĕ шутланнă май, çын сывлăхĕшĕн сиенлĕ япаласем пур. 60 градусран пысăк температурăра вăл ирĕлет, наркăмăшлă пăс кăларать. Енчен те унпа усă курас тетĕр пулсан формальдегидсен шайĕ ГОСТа тивĕçтернине тĕрĕслĕр е вăл Европăри Е1 стандартпа килĕшсе тăмалла, сертификат (çав шутра пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен калаканни те) пулмалла.

Панель çине обой çыпăçтарма пулать, анчах ку ĕç çăмăл мар, теприне çыпăçтарнă хыççăнхи илем килĕшмесен те пултарать тата ытти те. Сиенсĕр обойсене те суйлама пĕлмелле.

### Пилĕк тутăллă çимĕç

**? "Китайский лимонник" ятлă ӳсен-тăран пур. Çип тăрăх хăмла пек çӳле каять. Хам курман, анчах çырли вĕтĕ, хĕрлĕ тĕслĕ теççĕ. Çип карса ӳстермесен вăл пулмасть-мĕн. Мĕнле чиртен усăллă-ши вăл? Çулçине типĕтме юрать-и тата ăна хăш вăхăтра татмалла?**

**Елизавета ПАВЛОВНА. Вăрнар районĕ, Мĕлĕш ялĕ.**

Китай лимонникĕ 5 тĕслĕ тутă парать: унăн çырлин хуппи пылак, ăшĕ йӳçĕ, вăрри кăвасак, унран (вăрăран) хатĕрленĕ сиплĕхлĕ шĕвек вăхăт иртсен тăварланать. Ăна чăнах та шпалер кармасăр е çумра çӳллĕ хӳме пулмасан ӳстерейместĕн.

Лимонник çырли çынна вăй парать, нерв тытăмне çирĕплетет, чĕрешĕн çав тери усăллă. Ăна çисен пĕверĕн клеткисем çĕнĕрен вăй илеççĕ. Çак органа лимонник хӳтĕлет, сиплет. Гормонсен виçине йĕркене кĕртме пулăшать. Унран хатĕрленĕ шĕвек арçынсен ар пултараслăхне вăйлатать, типĕтнĕ çырла гастритпа аптăракансемшĕн аван тата ытти те.

Лимонникăн çулçинчен, хуппинчен хатĕрленĕ шĕвек цинга чирĕнчен, депрессирен пулăшать. Анчах çак ӳсен-тăранпа виçесĕр, тăтăшах усă курмалла мар. Унăн çулçине август уйăхĕнче пуçтараççĕ, вĕтетсе сулхăнра типĕтеççĕ.

## ÇЫРĂНТАРУ – 2015

**Хисеплĕ вулакансем! Кăçалхи иккĕмĕш çур çулта «Хресчен сасси – Кил» хаçат уйрăм кăларăмпа тухма пăрахать. Июль уйăхĕнчен пуçласа вăл 8 страницăпа тухса тăракан «Хресчен сасси» хаçат ăшĕнче пулĕ. Çур çуллăх хак – 297 тенкĕ те 78 пус, çырăнтару индексĕ – 54838. Халĕ хăшĕ-пĕри «Хресчен сасси – Кил» ятлă уйрăм хаçата çырăнса илме сĕнни «Хыпар» Издательство çурчĕпе пачах та çыхăнман!**

ХЎТЛĔХ ЯЛЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## АЛ АЙĔНЧЕ


*Серте*


*Мулкач курăкĕ*

●Сертене пахчаçăсем чи сиенлĕ çумкурăк шутне кĕртеççĕ. Вăл тимĕрпе, марганецпа пуяннине пĕлетĕр-и эсир? Ахальтен мар ăна чăваш мĕн авалтан çинĕ. Яшкана янисĕр пуçне сертене салата та хушма юрать. Ăна хĕле валли типĕтсен аван. Çак çумкурăк усăллă та, тутлă та.

●Пыл курăкне (медуница) хăш-пĕр кил хуçи хĕрарăмĕ аш-пăшран хатĕрленĕ апата ярать е ăна кукăль ăшĕ валли усă курать.

● Тростникре аскорбин кислоти тата А витамин нумай. Вăл тарлатать, шăк хăвалакан çимĕç шутланать.

● Сиплев тĕллевĕпе шăнăр курăкĕпе анлăн усă кураççĕ. Унта çавăн пекех каротин, К витамин, лимон кислоти тата фитонцид нумай. Ăна салат, запеканка, напиток хатĕрленĕ çĕре яма юрать.

● Пахчаçăсем шурутран мĕнле хăтăлмалли пирки шухăшлаççĕ. Тымарне кăкласан та вăл çĕнĕрен шăтса тухать, сарăлать. Анчах çак çумкурăкăн усси те пур: халăх медицининче унпа авалтан шăк хăвалакан, ўслĕке чаракан, тарлаттаракан хатĕр пек усă курнă. Типĕтнĕ тымарĕнчен мăн асаттесем кĕсел, пăтă пĕçернĕ. Шурут белоксемпе, углеводсемпе тата органика кислотисемпе пуян.

●Мулкач курăкĕ пирĕн тăрăхра анлă сарăлнă. Унăн çулçине, чечекне тĕрлĕ апат хатĕрленĕ çĕре яма юрать. Ку эмел курăкĕнче каротин, органика кислоти тата К витамин нумай.


*Шурут*


*Пыл курăкĕ*

## СĔНЎ-КАНАШ

**ПЎРЕРЕ ХĂЙĂР ТАТА ЧУЛ ПУЛСАН:**

• тин вĕренĕ 1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ чăрăштăрри ямалла, 20 минут тытмалла, сăрăхтармалла. Ирхине апат умĕн çур сехет маларах выç варла ĕçмелле. Сиплев курсĕн вăхăчĕ – 2-3 уйăх. Чăрăштăрри вак чулсене ватать.

• пўрене тасатма йĕтĕн вăрри пулăшать. 1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ йĕтĕн вăрри ямалла, вĕретмелле. 2 кун хушши кашни 2 сехетре 1/2 стакан ĕçмелле. Йĕтĕн шывĕ çăралнă май вĕретнĕ шыв, лимон сĕткенĕ хушмалла.

**УРАНА ШĂНĂР ТУРТСАН:**

• 1 стакан вĕри шыва пĕрер апат кашăкĕ панулми уксусĕ тата пыл ямалла, тўрех ĕçмелле. Çак виçепех кунне 2-3 хут усă курмалла.

• ирхине тата каçхине ура тĕпне лимон сĕткенĕпе сăтăрмалла, вăл типиччен кĕтмелле. Сиплев курсĕ – 2 эрне.

**ХУЛĂН ПЫРШĂ ШЫÇСАН:**

• тин вĕренĕ 1 стакан шыва пĕрер апат кашăкĕ вăй курăкĕ (золототысячник), эмел шур курăкĕ (шалфей), салтак тўми ямалла, кăштах тытмалла, сăрăхтармалла. Сиплĕ хутăша кунне 7-8 хутчен кашни 2 сехетрен 1 апат кашăкĕ ĕçмелле. Пĕр уйăхран виçене чакармалла.

**АРТРИТРАН, ЧĔРКУÇÇИ ЫРАТНĂРАН:**

• тăм пашалăвĕпе усă курмалла. Ăна ыратакан вырăнта 1,5 сехет тытмалла, илмелле, чĕркуççине çуса тасатмалла, çăмлă япалапа чĕркемелле. Сиплев – 10-12 сеанс. Теприне урăх тăм пашалăвĕпе усă курăр, малтанхи юрăхсăр.

## ĔМĔРЕ ТĂСМА

# Тибет медицинин вăрттăнлăхĕ

Кашни кун 0,4 стакан тин сунă сĕт ĕçмелле. Вăл сывлăш пўлĕннине иртерет.

Кунсерен 1-2 кашăк та пулин манна пăтти çимелле. Ытларах 40 çултан иртнисен. Çак пăтă шăмăсене, тĕртĕмсене, апата ирĕлтерекен тытăма çирĕплетет.

Курага организма вăй-хал кўрет, ытларах арçынна.

Пулă шўрпи вăйсăр çыншăн усăллă. Çăрттанран хатĕрлени лайăхрах.

Кашни кун măйăр, иçĕм çырли тата сыр çисен нерв тытăмĕ, чĕре çирĕпленет, ывăнни иртет, пуç ыратма чарăнать. Çак çимĕçсем пĕвер чирĕнчен те усăллă. Пĕр апатра 30 г аçтăрхан măйăрĕ, 20 г иçĕм çырли, 20 г сыр çимелле.

Атеросклерозран, чĕрепе пĕвер чирĕсенчен кунне 100 г тăпăрчă çимелле.

Лимонпа апельсин вара юн пусăмĕ ўсниненчен, хĕрарăм чир-чĕрĕнчен тата щит евĕр пар çителĕксĕр ĕçленинчен усăллă. Лимона хуппипе терка витĕр кăлармалла, сахăр хушмалла. Кунне виçĕ хутчен 1 чей кашăкĕ çимелле.

Шур çырлипе гастритран сипленеççĕ.

Çĕрçырли пĕверти чула кăларма пулăшать: кунне ултă хутчен 0,5 стакан çырла çимелле.

Панулми шăмă сыпписен чирĕнчен, склерозран усăллă.

Петрушка юна кĕвĕлме пулăшать. Ăна юн чирĕпе нушаланакансене çиме сĕнеççĕ, çулталăкĕпех усă курмалла.

Хура пилешре, ытти çырлапа танлаштарсан, йод нумай. Вăл склероз тата зоб чирĕсенчен сиплет. 1 кг хура пилеше 1 кг сахăрпа хутăштармалла, кунне виçĕ хутчен 1 чей кашăкĕ çимелле.

## АСРА ТЫТМА

# Таса шыв ĕçмелле

Таса шыв нумай ĕçмелли çинчен калаççĕ пурте. Талăкра 2 литр таранччен. Çакна хам тĕрĕслесе пăхма шут тытрăм. Хăш-пĕр чухне юн пусăмĕ виçерен ытлашши хăпарнăран малтанах шиклентĕм. Ирхине выç варла çур стакан ĕçнинчен пуçларăм. Апат умĕн çур сехет маларах çак виçепех усă куртăм. Каярахпа ерипен 1 стакан çине куçрăм. Ăна пĕчĕк сыпкăмсемпе ĕçрĕм. Çулталăк хушшинче чылай типшĕмлентĕм. Апат виçине чакартăм. Юн пусăмĕ те лайăхланчĕ.

Организмра шыв çителĕклĕ пулмасан юн çăралать. Çавăнпа сывлăх та хавшать. Чир-чĕрпе çыхланиччен таса шыв ĕçни усăллăрах.

**Валентина ТРИФОНОВА.**
**Патăрьел районĕ.**

## ЫЙТĂР – ХУРАВЛАТПĂР

# Усси те, сиенĕ те пур

**? Хăш-пĕр çын эмел курăкĕн шывне чей вырăнне усă курать. Вăл организмшăн сиенлĕ мар-ши?**

**Зоя АЛЕКСАНДРОВА.**

Паллах, эмел курăкĕн сиенĕ те пурах. Çавăнпа хăвăр тĕллĕн сиплениччен малтан тухтăрпа канашламалла. Сăмахран, пурте пĕлекен пĕтнĕк, салтак тўми, сар çип ути те сиенсĕр мар. Салтак тўмине çие юлнă хĕрарăмăн ĕçме юрамасть, варти ача ўкме пултарать. Сар çип утипе тĕрĕс мар усă курсан – наркăмăшланăн. Шĕпĕн курăкĕ, варăш кĕпçи (болиголов) пирки калама та кирлĕ мар. Вĕсене халĕ усал шыçăран усă кураççĕ.


**Варăш кĕпçи**

# Мĕн сĕнетĕр?

**? Мана арлăх парĕн аденоми аптăратать. Эмел ĕçетĕп, анчах пулăшмасть. Çак чиртен халăх медицини мĕн сĕнет-ши?**

**Алексей СМИРНОВ. Куславкка районĕ.**

Ку чиртен сипленме сире хăш-пĕр мелпе паллаштаратпăр:

Арлăх парĕн аденоминчен кавăн пулăшать. Ытларах сĕткенĕ. Ăна кашни кун пĕрер стакан 2-3 эрне ĕçмелле. Сĕткене 1 апат кашăкĕ пыл хушмалла. Аденома чирĕнчен кавăн вăрри те лайăх. Ăна типĕтмелле, ăшалама кирлĕ мар. Талăкра 100-120 гр пĕр уйăх хушши çимелле. Вĕтетнĕ вăрра апата хушма юрать.

Пуçлă суханпа сипленсен те аван. Кашни кун çывăрма выртас умĕн пысăках мар пĕр сухан çимелле е унăн шывне 50 гр ĕçмелле. Ăна çапла хатĕрлемелле: вăтам икĕ сухана вĕтетмелле, тин вĕренĕ 0,6 л шыва ямалла, хупламалла, 2 сехет тытмалла. Эмеле сухан хуппинчен те хатĕрлеме пулать: 1 стакан сухан хуппине çумалла, дуршлаг витĕр кăлармалла, 0,5 л шыва ямалла. Вăйсăр çулăм çинче 7 минут вĕретнĕ хыççăн 40 минут тытмалла, 3 апат кашăкĕ пыл хушса пăтратмалла, 5 кун çуршар стакан кунне виçĕ хутчен ĕçмелле. 7 кун тăхтанă хыççăн сиплев курсне малалла тăсмалла.

Кун пек чухне ыхра та пулăшать. Вĕтетнĕ 200 гр ыхрана вăтам 12 лимон сĕткенĕпе хутăштармалла, 24 кун тытмалла. 1 чей кашăкĕ хатĕр эмеле çур стакан шывпа хушмалла, кунне пĕр хутчен 1 чей кашăкĕ виçĕ эрне ĕçмелле. 7 кун тăхтанă хыççăн сиплев курсне малалла тăсмалла.

Шĕпĕн курăкĕ те усă кўрет. 1 апат кашăкĕ вĕтетнĕ шĕпĕн курăкне вĕрекен 1 стакан шыва ямалла, 2 сехет тытмалла, сăрăхтармалла. Сиплĕ шыва кашни кун виçĕ хутчен апат умĕн çур сехет маларах пĕрер апат кашăкĕ ĕçмелле. Виçене çирĕп пăхăнмалла.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## ПĔЛМЕ ИНТЕРЕСЛĔ

✓ Пĕрремĕш Петĕр патша сыпăсем ыратнăран хĕç курăкĕпе (сабельник) сипленнĕ.

✓ Сурана хăвăртрах тўрлетес тĕллевпе Александр Невский упа вачĕпе тата саллипе усă курнă.

✓ Георгий Жуков маршала упа вачĕ радикулитран пулăшнă.

✓ Ф. Каплан В.И. Ленина персе амантнă хыççăн унăн суранĕсене пурăш тата упа çăвĕпе сĕрнĕ.

✓ Александр Суворов «Наука побеждать» кĕнекинче, çавăн пекех монографийĕсенче хăй хырăмлăх язвипе нушаланни çинчен çырнă. Çапах вăл 70 çула çитиччен пурăннă. Ку енĕпе паллă çар пуçне упа ватĕнчен хатĕрленĕ шĕвек пулăшнă. Хăть ăçта кайсан та вăл ăна хăйĕнчен хăварман.

## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРЎСЕМ

### СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. **Без выходных. Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6. ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Т.: 89278441501, 674642.

**8. Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирп. бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**11. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**22. Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Т. 89061355241.

**29. Косилки,** грабли, фрезы, **опрыскиватели,** картофелесажалки, **доильные аппараты.** ДОСТАВКА! Т.: 89379559802, 89373758095.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**30. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31. Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**33. Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**35.** Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ.** Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Рассрочка.** Скидки. Т. 8-937-391-39-91.

**43. БРУСЧАТКУ, плиты** тротуарные, **бордюры, водостоки.** Укладка. Т. 8-967-470-27-36 (Мир камней, Чебоксары, пр. Машиностроителей, 1Д).

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**58. Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** чернозем. Д-ка. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Доставка. Тел. 48-16-54.

**74. Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

## МĂНКУН СĔТЕЛĔ ÇИНЕ

### «Карçинкка» торт

*Бисквит: 200 г маргарин, 100 г сахăр, 3 çăмарта, 1 стакан çăнăх, 1 лимон, 1 чей кашăкĕ чустана кăпăшлантармалли хатĕр, ванилин.*

*Крем валли: 300 г услам çу, 1 стакан сахăр çăнăхĕ, 1,5 стакан хăйма (çуллăхĕ 25 процент), 1 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ.*

Сахăра, ванилина маргаринпа хутăштармалла, çăмарта ярса пăтратмалла. Терка витĕр кăларнă лимон (хупписĕр) çине чустана кăпăшлантармалли хатĕре ямалла. Çăнăх хушса чустана хăйма пек çăра пуличчен çăрмалла. Кекс формине çупа сĕрмелле, чустапа тултармалла, тикĕслемелле. 180 градуслă вĕри духовкăра 40-45 минут пĕçермелле. Хатĕр бисквита сивĕтмелле, виçĕ пая касмалла. Крем валли кăштах ăшăтнă услам çăва сахăр çăнăхĕпе, хăймапа, лимон сĕткенĕпе лайăх хутăштармалла. Хатĕр крема кашни коржа сĕрмелле, çиелтен карçинкка пек илемлетсе хумалла. Торт айккине те кремпа илемлетмелле. Кремран «ăсталанă» карçинккана шăккалат çăмартасем хумалла.

### Чăх чĕринчен – яшка

*1,5 л кастрюле: 150 г чăх чĕри, 2 çĕрулми, 1 кишĕр, 1 пуç сухан, 1-2 стакан хуратул, 1 пуç ыхра, тăвар, пăрăç, лавр çулçи, ăшалама ўсен-тăран çăвĕ, ешĕл çимĕç.*

Чăх чĕрине лайăх çуса тасатмалла. Сивĕ шыва пĕçерме лартмалла. Кăпăкне пуçтарса илмелле. Ыхра ярса 30 минут вĕретмелле. Çĕрулми ярса каллех вĕреме кĕртмелле. Унтан кĕрпе хушмалла, мĕн пиçиччен çулăм çинче тытмалла. Кишĕре шултра терка витĕр кăлармалла, сухана вĕтетмелле те çупа ăшаламалла. Ăна яшкана хушса тепĕр 5 минут вĕретмелле. Плита çинчен илсе вĕтетнĕ ешĕл çимĕç ямалла.

Яшкан тутине лайăхлатма, техĕмлĕрех тума ыхра яраççĕ.

### Çĕрулми хăпартăвĕ

*600 г сысна ашĕ, 600 г çĕрулми, 200 г бекон, 1,5 пуç сухан, 1 кишĕр, 2-3 стакан майонез, 3 шăл ыхра, 1 чей кашăкĕ юрма (аш валли), ешĕл çимĕç (петрушка, укроп, кинза), ўсен-тăран çăвĕ, тăвар, хура пăрăç.*

1. Соус валли майонеза вĕтетнĕ ыхрапа, ешĕл çимĕçпе, юрмапа, тăварпа хутăштармалла.

2. Сухана çурма çавракан тураса саралса хĕреличчен ўсен-тăран çăвĕпе пăшăхламалла. Кишĕре çўхе çаврашкан турамалла, çемçеличчен ăшаламалла. Аша – касăкпа, çĕрулмине – çаврашкан, бекона улăм пĕрчи пек турамалла.

3. Форма тĕпне ўсен-тăран çăвĕпе сĕрмелле. Аша, сухана кишĕрпе хутăштарса сарса хумалла. Çиеле соус ямалла. Аш çине çĕрулми хумалла. Тăвар, пăрăç сапмалла. Çĕрулми çине бекон сарса хурса каллех соус ямалла. Блюдăна фольгапа витсе 180 градуслă духовкăра 40 минут пĕçермелле. Унтан фольгана илмелле те тепĕр 25 минут тытмалла. Апат хатĕрлемелли вăхăт – 1,5 сехет.

## УЯВА ХАТĔРЛЕНСЕ



### Кулăшла куянсем

Уяв тĕлне хаваслă куян çемйине тума хăвăрт та çăмăл. Çăмартасене апат-çимĕç сăррипе сăрламалла. Тĕрлĕ тĕслĕ фетр (паха кĕççе) е хытă хутăн касăкĕсем илмелле. Кашнинчен куян хăлхине, сăмсине, шăлне (шăлĕ валли шурă тĕсли каять) касса кăлармалла. Тĕслĕ çипрен пĕр пек вăрăмăшпа сухал касса кăлармалла. Сăрланă çăмартасем çумне хăлхине, сухалĕпе шăлне çыпăçтармалла. Фломастерпа куçне ўкермелле.

### Илемлĕ чечек

Мăнкун çывхарнă тĕле кашниех çуртйĕре хитрелетме тăрăшать. Ăна ансат мелпех, укçа тăкмасăр та илемлетме май пур.

Уява маларах хатĕрлеме тытăнмалла. Вазăна сивĕ шыв ярса хĕрлĕ хăва туратне лартмалла. Çулçисем тухма пуçличчен тăхтамалла. Тĕрлĕ тĕслĕ хытă хутран куян касса кăлармалла. Унтан çăмарта ăшне юхтарса илмелле те хăва туратне капăрлатма усă курмалла. Хăшне-пĕрне куян çумне çыпăçтармалла. Çăмартана тĕрлĕ тĕспе сăрлама юрать. Ыттисене хутран касса кăларнă чечекпе, лентăпа е шăрçапа илемлетмелле. Лентăпа куянсене, çăмартасене хăва турачĕсенчен çакмалла.

## УСĂЛЛĂ СĔНЎСЕМ

✓ Свитера утюгпа усă курмасăрах якатма пулать. Ăна çемçе те нўрĕ алшăлли çине вырнаçтармалла. Хутланчăкĕсем якалсан çакса хумалла.

✓ Шампуне перекетлеме çўçе икĕ хут çумалла. Малтан алă тупанĕ çине шампунь кăштах тумлатмалла та çўçе çуса илмелле. Унтан каллех çакăн чухлĕ шампуньпех тепĕр хут çумалла. Капла вăл лайăх кăпăкланать, çўç те тасарах пулать.

✓ Пысăк мар лавккасенче кĕрпене, сахăра тата ытти апат-çимĕçе виçсе сутаççĕ. Хатĕр чĕркемрипе танлаштарсан вăл чылай йўнĕрех.

✓ Хĕлле-çуркунне улма-çырла туянма хаклă. Вăл тĕрĕс-тĕкел упрантăр тесен ăна килте лайăх çуса тасатăр, пластик курупкана хурса холодильника лартăр. Улма-çырла ун пек ытларах упранĕ.

## КĔСКЕН



### Лимон сĕткенĕ

Лимон сĕткенĕпе апат-çимĕç хатĕрленĕ чухне е кил-тĕрĕшре час-часах усă кураççĕ. Хăш-пĕр чухне вăл нумай та кирлĕ мар. Çурмаран каснă лимон вара хăвăрт типет. Енчен сĕткен пĕр тумлам кăна кирлĕ пулсан çимĕçе касмаççĕ. Çуса тасатнă хыççăн ăна шĕвĕртнĕ йывăç патакпа шăтармалла та сĕткенне кирлĕ чухлĕ юхтарса илмелле.

### Хытă какай

Вата выльăх-чĕрлĕх какайĕ хытăрах пулать. Кун пеккине пĕçерме те, çиме те чун туртмасть. Пĕçернĕ чухне вакланă аша улма-çырла касăкĕсемпе (апельсин, груша, панулми) хутăштарсан палăрмаллах çемçелĕ, тути те лайăхланĕ.

### Пушмак кĕллине çĕнетме

Пушмакăн кĕллине шăйăрттарнă пулсан çăмăллăнах çĕнетме пулать. Ăна лайăх çуса тасатмалла. Таса çĕткĕпе сăтăрса кăштах типĕтмелле та шăйăрттарнă вырăна лакпа сĕрмелле. Вăл кĕлепе пĕр тĕслĕ пулмалла.

## КИРЛĔ ПУЛĔ

### Резина атă. Мĕн пĕлмелле?



Çуркунне ялта резина атăсăр май çук. Унăн ĕмĕрне тăсас, пахалăхне çухатас мар тесен мĕн тумалла?

**1** Атă çинчи пылчăка ăшă шывпа çумалла. Унтан типĕ çĕтĕкпе сăтăрмалла. Çак майпах шал енчен те сăтăрмалла.

Çўхе тĕпне (стелька) хушшăн-хушшăн çумалла. Енчен резина атă çутă тĕслĕ пулсан тасалман вырăнсене ластикпа сăтăрмалла.

**2** Глицеринпа е ўсен-тăран çăвĕпе сĕрни атă тĕсне упрама пулăшать. Вазелин вара çуркаланасран сыхлать. Сĕрнĕ хыççăн типĕ çĕтĕкпе çиелтен шăлса илĕр.

**3** Резина атта батарей çинче типĕтме юрамасть. Вĕри çинче тытнă хыççăн ăна шыв кĕме пуçлать. Хĕвеллĕ çанталăкра та атă тăхăнма сĕнмеççĕ: ўкерчĕкĕ тĕссĕрленет, резина юрăхсăр тухать. Пўлĕмри температурăра ăшне хут хурса типĕтмелле.

## КУЛАР-И?

Васçук:

– Вĕçĕм çывăрас килет, ĕмĕрĕпех çывăрма хатĕр.

Микулай:

– Ĕмĕрĕпех çывăрма юрамасть, çиме кайрăмăр.

***

Амăшĕ ачине:

– Пўрнўне розеткăна ан чик! Çутă сўнет, çитменнине шăпах илемлĕ фильм кăтартнă вăхăтра.

## ЮРАТНĂ ЮРĂ

### Çуркунне

*Сăввипе кĕвви Олег Семеновăн*

Çуркунне çитсессĕн,
Чĕрĕлет тĕнче.
Кайăксем юрлаççĕ
Хăйсен юррине.

**Хушса юрламалли:**
Çуркунне, çуркунне,
Савăнăç илсе килсем.
Çуркунне, çуркунне,
Пачах ан пултăр кичем.

Çуркунне çитсессĕн
Уйăх çутинче.
Çамрăксем утаççĕ
Ял урамĕпе.

**Хушса юрламалли.**

Уйăх çутатайрĕ
Ешĕл таврана.
Тулли телей парĕ
Çуркунне мана.

**Хушса юрламалли.**

### Процент ставки пĕчĕкленнĕ

Раççей ялхуçалăх банкĕ халăха паракан кредит ставкине пĕчĕклетнĕ. Потребитель кредитне 4 процент таранах чакарнă. Хальхи вăхăтра тĕллевсĕр паракан кредитăн çулталăкри процент ставки – 23, пенсионерсен 20 процентран пуçланать. Хушма хуçалăх аталантарма параканнин ставки – 23 процентран. Раççей ялхуçалăх банкĕн кредичĕн условийĕсем пирки банк сайтĕнче паллашма пулать: http:||www.rshd.ru|natural|loans|

РФ Тĕп банкăн 3949-мĕш номерлĕ генеральнăй лицензийĕ.

Реклама

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, апрелĕн 6-мĕшĕ**

7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 6.30-7.00, 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Çĕр сум. (12+) 11.30-12.00 Говорит моя душа. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 16.30-17.00 Ялтан яла. (12+) 17.30-18.00 Путь к здоровью. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă. (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун – ытларикун, кĕçнерникун – эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, апрелĕн 7-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 19.10-20.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юнкун, апрелĕн 8-мĕшĕ**
**ПРОФИЛАКТИКА с 08:00 до 20:00**

6.00, 7.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)

8.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 20.30-21.00 Бумеранг. (12+) 21.10-22.00 Çиларман-шоу. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерникун, апрелĕн 9-мĕшĕ**

6.10-6.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 7.10-8.00, 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Бумеранг. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Мăшăр çунат. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+) 22.30-23.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрнекун, апрелĕн 10-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 8.10-8.30, 14.10-14.30, 18.10-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Асăмри юрăсем. (радиокараоке) (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30,17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-18.00 Литература çўпçинчен. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăматкун, апрелĕн 11-мĕшĕ**

6.00-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.10-12.00 Мальчик из Шоршел. (12+) 12.00-12.10, 16.00-16.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Мăшăр çунат. (12+) 16.30-17.00 Нам 41-й не забыть, нам 45-й славить . (12+) 17.30-18.00 Шурăмпуç. (12+) 18.30-19.00 Пурнăç çынни. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарникун, апрелĕн 12-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Шурăм пуç. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. (12+) 15.30-16.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 16.30-17.00 Мальчик из Шоршел. (12+) 17.10-18.00 Çиларман-шоу. (12+) 18.30-19.00 Сирĕн сад-пахча. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад) (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

## ТУНТИКУН, 6

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.50, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 2.50 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 1.05 «Время покажет» 16+
15.15 «Время покажет» Продолжение 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.55 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
23.50 «Познер» 16+
3.05 «Модный приговор» Продолжение
3.55 «Мужское / Женское» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.20 «Диктатура женщин»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
22.50 «Анальгетики. Пить или не пить?»
23.50 «Дежурный по стране» Михаил Жванецкий
0.50 Горячая десятка 12+
1.55 Т/с «ЧАСТНОЕ ЛИЦО»
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
21.40 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «МАСТЕРА СЕКСА» 18+
0.40 Т/с «ВТОРОЙ ШАНС» 18+
1.45 1.55 «Ахтунг, руссиш!» 0+
2.55 «Судебный детектив» 16+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.00 Т/с «ППС» 16+

## ЫТЛАРИКУН, 7

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.05 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
14.15, 2.10 «Время покажет» 16+
15.15 «Время покажет» Продолжение 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.15 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.25 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Структура момента» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.15 «Юрий Гагарин. Семь лет одиночества» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
22.50 «Шифры нашего тела. Неизвестные органы» 12+
23.50 «Судьба. Закон сопротивления» 12+
1.45 Т/с «ЧАСТНОЕ ЛИЦО»
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке) 12+
9.40-9.55 Вспомни, солдат (на чувашском языке) 12+
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
21.40 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «МАСТЕРА СЕКСА» 18+
0.40 Т/с «ВТОРОЙ ШАНС» 18+
1.50 Главная дорога 16+
2.30 «Судебный детектив» 16+
3.40 Дикий мир 0+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.00 Т/с «ППС» 16+

## ЮНКУН, 8

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.05 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
14.15, 2.10 «Время покажет» 16+
15.15 «Время покажет» Продолжение 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 1.15 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.25 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Политика» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.05 «Шифры нашего тела. Неизвестные органы» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
22.50 Специальный корреспондент 16+
0.30 «Последний бой Николая Кузнецова» 12+
1.30 Т/с «ЧАСТНОЕ ЛИЦО»
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
21.40 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «МАСТЕРА СЕКСА» 18+
0.35 Т/с «ВТОРОЙ ШАНС» 18+
1.50 Квартирный вопрос 0+
2.55 «Судебный детектив» 16+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.00 Т/с «ППС» 16+

## КĔÇНЕРНИКУН, 9

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55, 3.05 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
14.15, 1.15 «Время покажет» 16+
15.15 «Время покажет» Продолжение 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.25 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 Х/ф «ЭРНСТ НЕИЗВЕСТНЫЙ. «Я ДОВЕРЯЮ СВОЕМУ БЕЗУМСТВУ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.05 «Последний бой Николая Кузнецова» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СКЛИФОСОВСКИЙ» 12+
22.50 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.30 «Демократия массового поражения» 16+
1.40 Х/ф «НЕ СТРЕЛЯЙТЕ В БЕЛЫХ ЛЕБЕДЕЙ»
4.05 Комната смеха
4.45 Вести. Дежурная часть

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Сельская жизнь (на чувашском языке) 12+
9.15-9.55 С. Юхтар: Я сотворил центр жизни 12+
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Т/с «ЛЕНИНГРАД 46» 16+
21.40 Т/с «МЕНТОВСКИЕ ВОЙНЫ» 16+
22.40 «Анатомия дня»
23.30 Т/с «МАСТЕРА СЕКСА» 18+
0.40 Т/с «ВТОРОЙ ШАНС» 18+
1.55 «Дачный ответ» 0+
2.55 «Судебный детектив» 16+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.00 Т/с «ППС» 16+

## ЭРНЕКУН, 10

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.15, 5.10 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 Т/с «ОДНАЖДЫ В РОСТОВЕ» 16+
14.15 «Время покажет» 16+
15.15 «Время покажет» Продолжение 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос. Дети»
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 Х/ф «ЭРНСТ НЕИЗВЕСТНЫЙ. «Я ДОВЕРЯЮ СВОЕМУ БЕЗУМСТВУ» 16+
1.30 Х/ф «12 РАУНДОВ» 16+
3.35 Х/ф «В ПОИСКАХ САХАРНОГО ЧЕЛОВЕКА»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Главная сцена» Специальный репортаж
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 17.30, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «ПОСЛЕДНИЙ ЯНЫЧАР» 12+
16.00 Т/с «ЦВЕТ ЧЕРЕМУХИ» 12+
18.15 «Прямой эфир» 12+
21.00 «Главная сцена»
0.00 Х/ф «ПОДАРИ МНЕ НЕМНОГО ТЕПЛА» 12+
1.55 Х/ф «НЕ СТРЕЛЯЙТЕ В БЕЛЫХ ЛЕБЕДЕЙ»
3.20 «Демократия массового поражения» 16+

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.10 Человек труда 12+
9.20 Телеюрă12+
9.50-10.05 Точка зрения 12+
11.35-11.55 Вести-ПФО 12+
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «Кофе с молоком» 12+
9.00 «ДЕЛО ВРАЧЕЙ» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА. НОВЫЕ СЕРИИ» 16+
12.00 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.00 «Все будет хорошо!» 16+
16.20 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.40 Х/ф «СПАСАЙСЯ, БРАТ!» 16+

## ШĂМАТКУН, 11

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «УКРОЩЕНИЕ ОГНЯ»
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Целитель Лука» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «На 10 лет моложе» 16+
14.00 «Барахолка» 12+
14.50 «Голос. Дети»
16.50 «Кто хочет стать миллионером?»
18.15 «Угадай мелодию» 12+
19.00 Коллекция Первого канала
21.00 «Время»
21.30 «Сегодня вечером» 16+
23.30 Пасха Христова. Прямая трансляция богослужения из Храма Христа Спасителя
2.30 Х/ф «ЖИВИТЕ В РАДОСТИ»
3.55 Х/ф «ДОБРОЕ УТРО»

### РОССИЯ 1

4.40 Х/ф «МУЖИКИ!..»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.30, 14.30 Местное время. Вести-Москва
8.25 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Пасха. Чудо воскресения»
9.25 Субботник
10.05 «Освободители» «Танкисты» 12+
11.40 «Сергий Радонежский. Земное и небесное»
12.35, 14.40 Х/ф «СИЛА ЛЮБВИ» 12+
17.20 «Танцы со звездами» Сезон - 2015
20.00 Вести в субботу
20.25 Х/ф «СКАЗКИ МАЧЕХИ» 12+
23.30 «Пасха Христова» Прямая трансляция Пасхального богослужения из Храма Христа Спасителя
2.30 Х/ф «ОСТРОВ» 16+
4.55 Комната смеха

### ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш Ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам 12+
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке) 6+
14.30-14.40 Вести-Чувашия

### НТВ

5.45 Х/ф «КАЗАК» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
11.00 «Поедем, поедим!» 0+
11.50 Квартирный вопрос 0+
13.20 Своя игра 0+
14.10 «Я худею» 16+
15.00 «Схождение Благодатного Огня» из Иерусалима
16.20 Х/ф «ДВОЕ В ЧУЖОМ ДОМЕ» 16+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение»

## ВЫРСАРНИКУН, 12

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.45 «Соловки. Место силы»
6.00, 10.00, 12.00, 17.45 Новости
6.10 «Соловки. Место силы» Продолжение
6.40 Х/ф «УКРОЩЕНИЕ ОГНЯ»
8.10 «Служу Отчизне!»
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 К Дню космонавтики. «Земля в иллюминаторе» 12+
13.15 «Горько!» 16+
14.15 «Теория заговора» 16+
15.15 Коллекция Первого канала
18.00 «Точь-в-точь» 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.30 «Танцуй!»
0.50 Х/ф «МАЛЕНЬКАЯ МИСС СЧАСТЬЕ» 16+
2.45 «Модный приговор»
3.45 «Мужское / Женское» 16+

### РОССИЯ 1

5.25 Х/ф «ОСТАНОВИЛСЯ ПОЕЗД»
7.20 Вся Россия
7.35 Сам себе режиссер
8.25 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.55 Утренняя почта
9.35 «Сто к одному» Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.25, 2.35 «Россия. Гений места»
12.25, 14.25 «Один в один» 12+
16.00 Х/ф «БАРИСТА» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.35 Х/ф «МОЛЧУН» 12+
3.30 «Пасха. Чудо воскресения»
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### НТВ

6.05 Х/ф «СОЮЗ НЕРУШИМЫЙ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 15.30 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 СОГАЗ - Чемпионат России по футболу 2014/2015. «Зенит» - «Рубин»
15.50 Х/ф «Я СЧИТАЮ: РАЗ, ДВА, ТРИ, ЧЕТЫРЕ, ПЯТЬ...» 16+
18.00 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа»
20.00 «Список Норкина» 16+
21.10 Х/ф «МАМА В ЗАКОНЕ» 16+
1.00 Х/ф «МУХА» 16+
3.10 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
4.05 Т/с «ПЯТНИЦКИЙ. ГЛАВА ТРЕТЬЯ» 16+
5.05 Т/с «ППС» 16+

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 3.04 | 4.04 | 5.04 | 6.04 | 7.04 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, $^0C$ | 2-4 сехетре | –1 | –2 | +1 | 0 | +1 |
| | 14-16 сехетре | +3 | +4 | +4 | +4 | +6 |
| Çумăр çăвать | | – | – | 🌧 | 🌧 | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 749 | 752 | 751 | 747 | 746 |


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРŸСЕМ

### СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**78. Гравмассу, песок, щебень, керамблоки.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**79. ПРИЦЕПЫ** 1ПТС2 и мотоблока. Т. 8-905-344-47-35.

**89. БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. **Доставка.** Документы. Т. 89373866629.

**93. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.



**95. ТРУБЫ ВИТЫЕ,** офактуренные; **кованые элементы** в ассортименте. Т. 8-927-844-15-01.

**111. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната **от производителя**. Д-ка. Уст-ка. Скидки. Т. 89876667423.

**112. ТЕПЛИЦЫ от производ-ля.** Д-ка. Установка. Т. 89875751707.

**127. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128. ТЕПЛИЦЫ** из поликарбоната от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133. СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; проволоку, столбы. Доставка. Т.: 683045, 89379522211.

**138. ОКНА, ТЕПЛИЦЫ,** обшивка домов, **двери** стальные Т. 89196624097.

**143. ТЕПЛИЦЫ от производителя** – от 5950 руб. Т. 89276682828.

**148. ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА** – немецкое качество. Низкие цены. Замер и доставка – бесплатно. Т.: 89278506139, 89278500856.

**154. ОКНА и ПОТОЛКИ** – немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. **Пенсионерам скидки.** Т. 89176627164.

**164. Бой кирпича, песок, гравмассу,** торф, чернозем. Тел. 8-927-990-30-70.

**174. МОГИЛЬНЫЕ ОГРАДЫ, заборы, ворота** и др. изделия от производителя Т. 89276682828.

**180. Отруби, зерно, к/корм.** Д-ка. Т. 89373916016.

**188. Гравмассу, песок, щебень.** Т. 8-927-846-24-10.

**203. ГЕРБИЦИДЫ.** Рассрочка. Бартер. Т. 89023271853.

**787. Кирпич** любой, **гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 89033228078.

### ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.**
*Лиц. ЛО 21-01-001 096 от 06.06.2014г. МЗСР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**36. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает многие жизненные проблемы. Т. 89674743783.

**70. ОКНА, ДВЕРИ, ПОТОЛКИ.** Доступные цены. Договор, гарантия. Замер и консультация – бесплатно. Т. 89170788391.

**45. Лечение алкоголизма и табакокурения.** Т.: 89030662902, 89276673368.
*Лиц. 5001001230 от 08.06,2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**38. Чистка колодцев.** Т. 89613429059.

**77. НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**152.Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

### ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**28. Вăкăр, ĕне, тына,** сысна амисем. Т. 8-927-999-37-37.

**39. Коров, бычков и лошадей.** Т. 89603109878.

**50. Коров.** Т. 89278508564.

### ĔÇ / РАБОТА

**54. МОНОЛИТЧИКИ, КАМЕНЩИКИ** – в Подмосковье. Т. 89176737773.

**126.** В связи с началом строительства нового объекта **требуются монолитчики, каменщики.** Тел. 8-925-002-22-38.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редактор – В.В. Петрова
РЕДКОЛЛЕГИ:
В.В. Петрова – редактор
И.П. Никитина – корреспондент
Л.А. Никитина – корреспондент
Е.А. Трофимова – хаçат операторĕ

www.hypar.ru,
e-mail: hreschen@cbx.ru
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем:
директор-тĕп редактор – 56-00-67,
пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68,
реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70.
Факс (8352) 62-50-06

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 1216
Тираж 19719


* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.